инв. № 3102
41-160

Кӗнеке хыççăн кӗнеке



К. ПАУСТОВСКИЙ

# Мулкач тяпписем

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ
экземпляры ...
ПОЛУЧЕНЫ
14 июля 1941

К. ПАУСТОВСКИЙ



# МУЛКАЧ ТЯППИСЕМ

*М. Н. Тимофеева куҫарнӑ*

ЧАВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР 1941

Редактор *Кузьма Чулгась.*

Подписано к печати 14-VI—41 г. НТ 3518 Заказ № 201. Тираж 3.500 экз. Объем 1 п. л.

Отпечатано в тип. № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. г. Чебоксары, ул. Володарского, 5



Вырьăх тухтăрĕ патне, Заборье ятлă яла, Урженски кӳлли патĕнчен Ваня Малявин çĕтĕк ваткăллă тумтирпе чăркана пĕр пĕчĕк те ăшă мулкача илсе пычĕ. Мулкач йынăшать, куççульпе хĕрелсе кайнă куçĕсене мăчмăч тутарса илет.

— Эсĕ мĕн, ухмаха йĕрни мĕн?—тесе кăшкăрса пăрахрĕ вырьăх тухтăрĕ. — Эсĕ тата часах ман пата шăшисене илсе килме пуçлăн, шĕшлĕ.

— Эсир ан кăшкăрăр, ку мулкач ытти мулкачсенчен уйрăм, — тытăнса ларнă сассипе шăппăнрах каларĕ Ваня. — Ăна асатте парса ячĕ те, эмеллеме хушрĕ.

— Мĕнрен эмеллемелле?

— Унăн тяпписем ĕнсе кайнă.

Выльăх тухтăрĕ Ваняна алăк еннелле çавăрса тăратрĕ те, çурăмĕнчен тĕксе, çапла кăшкăрчĕ:

— Тухса кай, тухса кай! Пĕлместĕп эпĕ унăн тяпписене эмеллеме. Ăна суханпа шарикле те, аслаçу валли закуска пулĕ.

Ваня нимĕн те чĕнмерĕ. Вăл çенĕхе тухрĕ, куçĕсене мăчлаттарса илчĕ, сăмсине нăшт туртса стена çумне пырса тĕкĕнчĕ. Стена тăрăх куççуль юхса анчĕ. Çулланса вараланнă куртка ăшĕнчи мулкачĕ хуллен чĕтрет.

— Эсĕ мĕн, ачам? — тесе ыйтрĕ çынна шеллекен Униççе кинемей; вăл выльăх тухтăрĕ патне хăйĕн пĕртен-пĕр качакине илсе килнĕ. — Мĕн эсир, чунăмсем, иксĕр те куççуль тăкатăр? Е мĕн те пулса пулчĕ-и?

— Çунма пуçланă, асаттен мулкачи вăл, — хуллен каларĕ Ваня. — Вăрман çуннă чух тяпписене ĕнтнĕ те, халĕ чупма пултараймасть. Кĕçех вилсе кайĕ.

— Вилмест, ачам, — мăкăлтатрĕ Униççе. — Аслаçуна кала, мулкача чĕртесех тет пулсан, вăл ăна хулана, Карл Петрович патне илсе кайтăр.

Ваня куçĕсене шăлчĕ те вăрман витĕр киле, Урженски кӳлли патне вĕçтерчĕ. Вăл утса каймарĕ, вĕри те хăйăрлă çул тăрăх



—Мӗн эсир, чунӑмсем, иксӗр те куҫҫул тӑкатӑр?

çаруран чупсах кайрĕ. Çунăк шăрши килет. Вăрман кӳлĕ хĕрринченех çурçĕр еннелле çунса кайнă. Çунăк шăрши тата типсе кайнă шурă гвоздика шăрши кĕрет. Гвоздика кунти уçланкăсенче талкăшĕпех ӳсет.

Мулкач йынăшать.

Ваня çул çинче çемçе, кĕмĕл пек çӳçпе витĕннĕ мулкач купăстин çулçисене тупрĕ. Вĕсене татса вăл пĕр хыр айне хучĕ, мулкача тумтир ăшĕнчен кăларчĕ. Мулкач купăста çулçи çине пăхса илчĕ, пуçĕпе вĕсем çине чикĕнчĕ те шăп пулчĕ.

— Эсĕ мĕн, сăрăскер? — хуллен ыйтрĕ Ваня. — Çисе пăх ĕнтĕ.

Мулкач сикмерĕ те.

— Çисе пăхсам ĕнтĕ, — тепĕр хут каларĕ Ваня, чĕтрекен сассипе. — Тен сан ĕçес килет?

Мулкач çурăк хăлхине хускатса илчĕ те куçĕсене хупрĕ.

Ваня ăна алла илчĕ те тӳр çулпа вăрман урлă чупса кайрĕ, — часрах кӳлĕ патне çитсе мулкача шыв ĕçтермелле вĕт.

Вăл çул вăрман тăрăхĕнче нихçан пулман шăрăх çанталăк тăчĕ. Ирсерен шурă та тачка пĕлĕтсем капланса тухаççĕ. Кăнтăрлапа вĕсем çӳлелле хăпарса, куç умĕнчех таçта çити кайса пĕлĕт хĕррисенче куçран çухалаççĕ. Икĕ эрне хушши ĕнтĕ шăрăх та типĕ çил пĕр чарăнмасăр вĕрсе тăрать. Хырсем

çинчен ирĕлсе юхса аннă сухăрсем илемлĕ чул пек курăнса тăраççĕ.

Ирпе аслашшĕ таса тăлапа çĕнĕ çăпата сырчĕ, аллине вăрăм туя илсе пĕр татăк çăкăр чикрĕ те хуланалла уттарчĕ. Ваня хыçалтан мулкача йăтса пычĕ. Мулкачĕ пĕрре те хускалмасть, сайра-хутран кăна пĕтĕм пĕвĕпе чĕтресе, шăнăр туртнă пек, сывласа илет.

Шăрăх та типĕ çил хула çийĕнче çемçе тусана çăнăх пек çавăрать. Тусан ăшĕнче чăх тĕкĕсем, типсе кайнă çулçăсем, улăмсем çавăрăнаççĕ. Инçетрен пăхсан, хула çийĕнче вăйсăр пушар тĕтĕмĕ капланса тăнă пек туйăнать.

Пасар вырăнĕ пушах, çанталăкĕ шăрăх, ямшăк лашисем шыв ăсакан будка патĕнче тĕлĕрсе тăраççĕ, вĕсен пуçĕсем çине улăм шлепкесем тăхăнтартнă. Аслашшĕ сăхсăхса илчĕ.

— Те лаша, те çураçнă хĕр — шуйттан уйăрать-и, — терĕ те лач сурчĕ.

Иртен-çӳренсенчен нумайччен вĕсем Карл Петрович çинчен ыйтрĕç, анчах никам та йĕркеллĕн каласа паракан пулмарĕ. Вара вĕсем аптекăна кĕчĕç. Пенсне тата шурă кĕске халат тăхăннă ватă та шыçмак çын çиленсе, хулпуççийĕсене чĕтретсе çапла каларĕ:

— Ку мана килĕшет! Тĕлĕнмелле ыйту! Карл Петрович Корш ача-пăча чирĕсен специалисчĕ—анчах вăл виçĕ çул ĕнтĕ хăй патне чирлисене йышăнмасть. Мĕн тума кирлĕ вăл сире?

Аслашшĕ аптекăре хисеплесе тата унтан шикленсе тытăнчăклă сасăпа мулкач çинчен каласа пачĕ.

— Ку мана килĕшет! — терĕ аптекарь. — Тĕлĕнмелле пациентсем пур иккен пирĕн хулара. Ку мана питех те килĕшет!

Вăл çиленнĕ пек пенснине хывса шăлчĕ, ăна каллех сăмси çине лартрĕ те, аслашшĕ çине тинкерсе пăхма пуçларĕ. Аслашшĕ шарламасăр пĕр вырăнта тăпăртатса тăчĕ. Аптекарь та нимĕн те чĕнмест. Çакнашкал чĕнмесĕр тăнине чăтма йывăрланчĕ.

— Почта урамĕ, виççĕ! — тесе хавассăн кăшкăрса ячĕ те аптекарь, çĕтĕлсе пĕтнĕ темĕнле хулăн кĕнекине шалт тутарса хупрĕ. — Виççĕ!

Ваняпа аслашшĕ Почта урамне вăхăтлă пырса тухрĕç, — лапах çак самантра Ока шывĕ леш енчен аслатиллĕ çумăр пĕлĕчĕсем хăпара пуçларĕç. Горизонт хыçĕнчен, тин çеç çывăрса тăнă вăйлă çын анасланă пек, ерипен аслати кĕмсĕртетрĕ, вăл кĕмсĕртетнĕ хыççăнах çумăр çума пуçларĕ. Юханшыв çийĕ шатраланса кайрĕ. Сассăр çиçĕмсем вăрттăн тухса сасартăк çарансем



Ку мана килӗшет, — терӗ аптекарь. — Тӗлӗнмелле пациентсем пур иккен пирӗн хулара.

ҫине пырса хыттӑн ҫапаҫҫӗ; инҫетре, Поляны ял хыҫӗнче, вӗсем чӗртсе янӑ утӑ капанӗ ҫунни курӑнать. Шултра ҫумӑр тумламӗсем тусанлӑ ҫул ҫине ӳкеҫҫӗ, часах ҫул уйӑх ҫийӗ пек курӑнма пуҫларӗ, — ҫумӑрӑн кашни тумламӗ тусан ҫине вулкан кратӗрӗ евӗр пӗчӗк ҫаврашкасем туса хӑварать.

Ваньӑн сапаланса кайнӑ сухаллӑ аслашшӗ чӳречерен пӑхнӑ чух Карл Петрович рояль ҫинче темӗнле хурлӑхлӑ та хумхантаракан кӗвӗ выляса ларнӑ.

Пӗр минутранах Карл Петрович ҫиленме те пуҫларӗ.

— Эпӗ выльӑх тухтӑрӗ мар, — терӗ те, рояль хуппине хупса хучӗ. Ҫак самантрах ҫарансем ҫинче аслати кӗрслеттерни илтӗнсе кайрӗ. — Эпӗ ӗмӗр тӑршшӗпех ачасене эмелленӗ, мулкачсене мар.

— Хуть ача, хуть мулкач — пурпӗрех ӗнтӗ, — чӑрсӑрланса мӑкӑртатрӗ аслашшӗ. — Пур-пӗрех! Эмеллесемччӗ ӗнтӗ, кӑмӑл тусамччӗ! Пирӗн выльӑх тухтӑрне кун пек ӗҫсем килӗшмеҫҫӗ. Вӑл пирӗн коновал вӗт. Ку мулкача мана вилӗмрен ҫӑлакан теме те юрать, эпӗ ӑна хам пурӑнӑҫа пама, тав тума тивӗҫ, а эсӗ пӑрахма хушатӑн!

Тепӗр минутран Карл Петрович, — кӑвакарнӑ, сапаланчӑк куҫхаршиллӗ старик, — хумханса, аслашшӗ тытӑнчӑклӑн каласа панине итлеме пуҫларӗ.



Тепĕр кун иртсенех пĕтĕм Почта урамĕ Карл Петрович мулкача сыватни çинчен пĕлчĕ.

Юлашкинчен, Карл Петрович мулкача эмеллеме килӗшрӗ. Тепӗр ирпе аслашшӗ кӳлӗ патне кайрӗ, Ваняна Карл Петрович патне мулкача пӑхма хӑварчӗ.

Шӑпӑр куракӗпе витӗннӗ пӗтӗм Почта урамӗ тепӗр кунтан Карл Петрович вӑрманти хӑрушӑ пушарта ӗнсе кайна мулкача эмеллени ҫинчен, ҫав мулкач темӗнле старике вилӗмрен ҫӑлса хӑварни ҫинчен пӗлчӗ. Тепӗр икӗ кунтан кун ҫинчен пӗтӗм пӗчӗк хула пӗлчӗ, виҫҫӗмӗш кунне Карл Петрович патне пӗр вӑрӑм, фетровӑй шлепке тӑхӑннӑ ҫамрӑк пычӗ, вӑл Мускавра тухакан хаҫатӑн сотрудникӗ пулатӑп, тесе пӗлтерчӗ те, мулкач ҫинчен ыйтса пӗлесшӗн пулчӗ.

Мулкача сыватрӗҫ. Ваня ӑна ваткӑллӑ ҫӗтӗкпе чӑркарӗ те килне илсе кайрӗ. Часах мулкач историйӗ ҫинчен манса кайрӗҫ, Мускаври пӗр темле профессор кӑна аслашшӗнчен ҫав мулкача хӑйне сутма нумайччен йӑлӑнчӗ. Вӑл ҫыру ӑшне, каялла ответ яма тесе, маркӑсем те чиксе яратчӗ. Анчах аслашшӗ яхӑнне те килӗшмерӗ. Аслашшӗ каласа пынипе Ваня профессор патне ҫакӑн пек ҫыру ҫырса ячӗ:

„Мулкач чӗрӗ чун, сутмалли япала мар, пурӑнтӑрах ирӗкре. Сывах юлатӑп Ларион Лялин“.

Ҫак кӗркунне эпӗ Урженски кӳлӗ хӗрринче пурӑнакан Ларион мучи патӗнче ҫы-

вăртăм. Сиввĕн пăхакан çăлтăр ушкăнĕсем, пăр татăкĕсем пек, шывра ишсе çӳретчĕç. Типĕ хăмăш шавлатчĕ. Хăмăшлăхра шăнса ĕнтĕркенĕ кăвакалсем çĕрхутах нартлатрĕç.

Мучи çывăраймасть. Вăл кăмака умĕнче, çĕтĕлсе пĕтнĕ пулă тытмалли сĕрекене юсаса ларчĕ. Унтан вăл сăмавар лартса ячĕ, пăс тухнипе пӳртри чӳречесем часах тарласа кайрĕç, кăвар пек курăнакан çăлтăрсем вара тĕтреллĕн те темиçе тĕслĕ шарсем пек курăна пуçларĕç. Карташĕнче Шарик вĕретчĕ. Вăл тĕттĕмре уртăнса сикет, шăлĕсемпе качăртаттарса каялла сиксе илет—сĕм-тĕттĕм октябрь каçĕпе вăл çĕрĕпех çапла кĕрешрĕ. Мулкач çенĕкре çывăрчĕ, сайра хутран кăна вăл тĕлĕкре кайри тяпписемпе çĕрĕк урай хăмине хыттăн тапа-тапа илет.

Эпир тул çутăласса кĕтсе чей ĕçсе лартăмăр, чей ĕçнĕ хушăра, юлашкинчен, мучи мана мулкач историйĕ çинчен каласа пачĕ.

Август уйăхĕнче мучи кӳлĕн çурçĕр енчи хĕррине сунара кайнă пулнă. Вăрман типсе ĕнсех кайнă, пĕчĕк хĕмпех вăл тар пек хыпса кайма пултарнă. Мучине çурăк хăлхаллă мулкач тĕл пулнă. Мучи ăна кивĕ те пралукпа çыхса пĕтернĕ пăшалĕнчен персе янă, анчах тивертеймен. Мулкач тарнă.

Мучи малалла кайнă. Анчах сасартăк хăраса ӳкнĕ: кăнтăртан, Лопухов ялĕ енчен, вăйлă ĕнĕк шăрши сăмсана çапнă. Çил тухнă.

Тĕтĕм çăрала пуçланă, вăрман тăрăх вăл шур шăналăк пек сарăла пуçланă, тĕмĕсене хупăрланă. Сывлама йывăр пулнă.

Мучи вăрман çуннине, тĕтĕм тӳрех ун патнелле пынине асăрхаса илнĕ. Вăйлă çилтăвăл тапранса кайнă. Çулăма вăл тĕлĕнмелле хăвăртлăхпа хăвалана. Мучи калана тăрăх, ку çулăмран поезд та хăтăлма пултарайман. Мучи калани тĕрĕс пулнă: çилтăвăл вăхăтĕнче çулăм пĕр сехетре вăтăр километр малалла куçса пынă.

Мучи такăна-такăна, ӳке-ӳке тĕмескесем урлă чупнă, унăн куçне тĕтĕм çинĕ, хыçалта кĕрлени, çулăм çатăртатни илтĕне пуçланă.

Мучин вилĕмĕ çывхарсах пынă, вилĕм ăна хулпуççисенчен ярса илесшĕн пулнă, çав вăхăтра унăн ури айĕнчен мулкач сиксе тухнă. Вăл хуллен чупнă, хыçалти урисене сĕтĕрсе пынă. Кайран тин мучи унăн урисем ĕннине асăрхаса илнĕ.

Мучи мулкача курнишĕн савăннă, вăл уншăн хăй тăванĕ пекех туйăннă. Вăл, авалтанпах вăрманта пурăнса ӳснĕскер, тискер кайăксем этемрен сисĕмлĕрех пулни çинчен, вĕсем вăрман хăш енчен çунса килнине сиссе пур вăхăтра та çăлăнни çинчен аванах пĕлнĕ. Вилессе вĕсем сайра хутра çеç, çулăм пур енчен те çавăрса илнĕ чух кăна вилнĕ.

Мучи мулкач хыççăн чупнă. Вăл макăра-макăра чупнă, хăранипе çапла каланă:



Мучи мулкач хыççăн чупнă.

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА

„Тăхта-ха, савнă тусăм, кун пекех хăвăрт ан чуп-ха!“

Мулкач мучине вутран хăтарнă. Вăрмантан кӳлĕ патне чупса тухсан, мулкачпа мучи ывăннипе иккĕшĕ те çĕре ӳкнĕ. Мучи мулкача илнĕ те киле йăтса кайнă. Мулкачăн кайри тяпписемпе хырăмĕ ĕннĕ пулнă. Кайран мучи ăна сыватнă та хăй патне хăварнă.

— Çапла,—терĕ мучи, çакăншăн пуриншĕн те сăмавар айăплă пулнă пек ун çине çиленсе пăхса,—çапла, çав мулкач умĕнче эпĕ питĕ айăплă, ырă çыннăм.

— Мĕншĕн-ха эсĕ айăплă?

— Эсĕ тухса пăх, мана вилĕмрен хăтаракан мулкач çине пăх, вара пĕлĕн. Авă, хунар ил!

Эпĕ сĕтел çинчен хунар илтĕм те çенĕке тухрăм. Мулкач çывăрать. Эпĕ хунарпа çутатса пĕшкĕнсе пăхрăм та, мулкачăн сулахай хăлхи çурăккине куртăм. Вара эпĕ пурне те ăнланса илтĕм.



Цена 50 коп.

К. ПАУСТОВСКИЙ

# ЗАЯЧЬИ ЛАПЫ

На чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧАССР
Чебоксары ■ 1941